26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
МАРТ
12
ЭРНЕКУН
56(6293) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Пирĕн войскăсем БЕЛЫЙ хулине йышăнса илнĕ

Мартăн 10-мĕшĕнче пирĕн войскăсем наступлени туса пырса БЕЛЫЙ хулине йышăнса илнĕ. (СМОЛЕНСК облаçĕ).

Тытса илнĕ трофейăсене шута илеççĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Хĕрлĕ Çар XXV çул тултарнă уяв ячĕпе панă приказра Сталин юлташ нимĕçсен фашистла захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкмашкăн халăхăн мĕнпур вăйне, мĕнпур майсене мобилизацилеме чĕнчĕ. Çулпуçăн чĕнĕвĕ тăван çĕршывра патриотизмлă тата производствăллă çĕнĕ çĕкленӳ пуçарчĕ. Сталин юлташ: «Хĕрлĕ Çарăн малашне те улталлă та тискер, халлĕхе вăйлă тăшмана хирĕç хаяр кĕрешӳ туса пымалла пулать. Çак кĕрешӳ вăхăт, жертвăсем ыйтать, хамăрăн мĕнпур вăя хума тата мĕнпур майсене мобилизацилеме хушать», тесе чĕнннине ответлесе, çĕршыври малта пыракан предприятисем Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва пуçарса ячĕç.

Ăмăртăва чи малтан 92-мĕш номерлĕ артиллери завочĕн коллективĕ пуçарчĕ. Хĕрлĕ Çар XXV çул тултарнă уяв умĕнхи социализмлă ăмăртура илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçланă хыççăн, завод коллективĕ мартпа апрель уйăхĕсенчи программăна срокчен тултарма, планран иртерсе 12 полк валли тупăсем тата тăватă танковăй бригада валли хĕçпăшал туса кăларма обязательство илчĕ, пирĕн çĕршыври мĕнпур предприятисене Май уявĕ умĕнхи Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яма чĕнсе каларĕ.

92-мĕш номерлĕ завод работникĕсен пуçарăвне Чăваш республикинчи малта пыракан предприятисемпе промартельсем хăвăрт йышăнса илчĕç. Н-ски завод коллективĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура иртнĕ çулхи май уйăхĕнчех лайăх результатсем кăтартса пыраканскер, пĕрремĕш кварталти продукци кăлармалли плана мартăн 20-мĕшĕ тĕлне тултарнă; апрелĕн 1-мĕшĕнчен çĕршыва планран иртерсе 10 миллион та 500 пин тенкĕлĕх продукци пама; апрель уйăхĕнче [illegible] ĕç тухăçлăхне [illegible] процент ӳстерме; электростанци валли продукци кăлармалли заказа 15 кун маларах, пĕр наркомат заказне — мартăн 15-мĕшĕ тĕлне, тепĕр наркоматăн заказне — 5 кун маларах пурнăçлама тата ытти обязательствăсене илнĕ.

Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, тепĕр заводри рабочисемпе мартăн апрель уйăхĕсенче обороналла продукцие 5 процент чухлĕ нумайрах кăларма, питех те кирлĕ изделисем кăлармалли плана 3 кун маларах, икĕ уйăх хушшинче материалсене 40 пин тенкĕлĕх перекетлеме пулнă. «Большевик» заводра ĕçлекенсем март тата апрель уйăхĕсенчи производство планне 105 процент тултарма, ĕç тухăçлăхне 25 процент ӳстерме, продукцин хăйне хакне 5 процент йӳнетме, [illegible] 3 процент чухлĕ [illegible]. Кунсăр пуçне Май уявĕ умĕнче заводра 75.000 тенкĕлĕх рационализацилле сĕнӳсем пурнăçлама, 25 çамрăк рабочие вĕрентсе хатĕрлеме.

Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва республикăн куллен çĕнĕ предприятийĕсем, артельсем, колхозсемпе МТС-сем хутшăнаççĕ. Вĕсем, социализмлă ăмăртăва хутшăнса, фронта пулăшас тĕллевпе тата вăйлăнрах ĕçлеме сăмах параççĕ, çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ.

Партипе хуçалăх организацийĕсен руководителĕсен Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва большевикла ертсе пырас пулать. Обязательствăсем илни вăл — ăмăртура çĕнтерӳ тунине пĕлтермест-ха. Ăмăртăвăн ăнăçлăхне çав обязательствăсене пурнăçа кĕртни татса парать. Çавăнпа обязательство хăй тĕллĕн пурнăçа кĕрессине шанса пуранакансем пулмалла мар.

Партипе хуçалăх организацисен руководителĕсен тата ăмăрту участникĕсен çакна асра тытмалла: ăмăртура вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене хăюллăн çĕнтерме пултаракансем çеç, мĕнпур вăя хурса, мĕнпур майсемпе тата ресурссемпе усă курса ĕçлекенсем çеç çĕнтереççĕ.

Мартпа апрель уйăхĕсем 1943 çулхи производство планне пурнăçлас ĕçĕн ăнăçлăхне татса параççĕ. Март уйăхĕнче пĕрремĕш кварталти производство планне тултарни иккĕмĕш кварталта тикĕс ĕçлеме, çавăн пекех çурçулти плана ăнăçлăн пурнăçлама майсем туса парать. Март уйăхĕнче пирĕн республикăра плана тултарман пĕр предприяти те ан пултăр. Кашни завод, фабрика тата артель коллективĕ производство планне пĕтĕмĕшпе анчах мар, кашни изделипе тăрăх тултарма тивĕç.

Ăмăртăвăн ăнăçлăхĕ, кунсăр пуçне, унта мĕнпур массăсене хутшăнтарнинчен, кашни рабочипе работница кулленхи нормăна ăнăçлăн тултарса пынинчен, производство командирĕсен пултарулăхĕпе тавçăрулăхĕнчен чылай килет. Партипе профсоюз организацийĕсен социализмлă ăмăртăва лайăхрах организацилессишĕн çине тăрса кĕрешмелле, политикăллă-массăллă тата массăллă-ăнлантарулла ĕçсене вăйлатмалла. Ăмăртура малта пыракансене тата чăрмантарса пыракансене тăтăшах кăтартса тăмалла. Ку ĕçре нагляднăй агитацие стена хаçачĕсем пысăк пулăшу пама тивĕçлĕ.

Производство командирĕсен предприятин, цехĕн, сменăн паянхи ĕçне çеç мар, интересленмелле мар, вĕсен малашлăхне те [illegible]. [illegible] Çуркунне республикăн предприятийĕсем артельсен урăх условисенче ĕçлемелле пулать. Çавăнпа апрельпе майăн уйăхĕсенче [illegible] хатĕрлесе хурас пулать. Куславкка комбиначĕпе Çĕмĕрлери «Большевик» заводăн руководителĕсем [illegible] хатĕрленме кирлĕ, [illegible] хăйсен материалсене [illegible]. Чĕртавара тата электроэнерги перекетлемелле, режима çирĕп тытса пымалла. Рационализаторсемпе производство процесне лайăхлатма тăрăшакансене куллен пулăшса тăмалла.

ВКП(б)-па пĕр халăх комиссарĕсем [illegible], Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи февраль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Çĕмĕрле комбинатне вĕçĕмсĕр преми пама йышăннă. Челноков юлташ директор заместителĕ пулса, Власов юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводсем, Улатăрти паровозсем юсакан завод, Шупашкарти ликерпа эрех заводĕ, табак фабрики, выранти промышленноçĕ республикăри чылай предприятийĕсем февраль уйăхĕнчи плана ăнăçлăн пурнăçланă. Анчах хăшпĕр предприятисем февраль уйăхĕнче планне тултараймаи. Вăл шута Канашри вагонсем юсакан завод та кĕрет.

Февраль уйăхĕнче тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерсе, Май уявĕ умĕнхи ăмăртура пысăк çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешер!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 9-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Нимĕçсем Донбасс—Харьков районĕнче контрнаступлени туни

Донбасс районĕнче тăшман иртнĕ çапăçусенче лумăрканнă тата арканнă хăйĕн 8 танковăй тата 5 пехотнăй дивизийĕсене çĕнĕ вăйсем хушса панă тата вăл нумаях пулмасть Хĕвеланăç Европăран çав района кăна 12 çĕнĕ дивизи илсе пынă: 4 танковăй, пĕр мотодивизи тата 7 пехотнăй дивизи илсе пынă. Çаплах вара нимĕçсем фронтăн ансăр участокĕнче 12 танковăй дивизи, пĕр мотодивизи тата 12 пехотнăй дивизи, мĕнпурĕ 25 дивизи пухса тăратнă.

Февраль уйăхĕн вĕçĕнче тăшманăн çав вăйĕсем пирĕн Днепр патнелле кĕрсе кайнă войскăсене хирĕç вăйлă контратакăсем тума пуçланă. Нимĕç командованийĕ нумай шала кĕрсе кайса ик енчен те пыра-пыра çапса, пирĕн мала тухса тăнă войскăсене çавăрса илсе пĕтерсе тăкасшăн пулнă тата Харьков районне тытса илесшĕн пулнă.

Пирĕн малта пыракан войскă чаçĕсем, йышлăрах тăшманпа вăйлăн çапăçса ăна чарса пырса, командовани хушнă тăрăх вăхăтра çурçĕрхĕвелтухăçнелле, Çурçĕр Донецăн çурçĕр хĕрринчи районне чакнă, вĕсем çапла чакса Красноград, Лозовая, Павловград, Красноармейское, Краматорская, Барвенково, Славянск, Лисичанск хулисене хăварнă.

Тăшман малалла тапăнса пыма, Çурçĕр Донец шывĕ урлă каçма тата Харькова тытса илме хăтлашнине пирĕн войскăсем вăйлăн хирĕç тăнă, нимĕçсен ĕçĕ ăнăçмасть. Хаяр çапăçусенче нимĕçсен фашистла войскисем çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен, уйрăмах та танксем тĕлĕшĕнчен, питĕ пысăк çухатусем тӳсеççĕ; çав хаяр çапăçусем халь Харьковран кăнтăралларахри тата хĕвеланăçнерехри районсенче пыраççĕ.

Пирĕн войскăсем февраль вĕçĕнчен пуçласа мартăн 8-мĕшне çитиччен противникăнне пĕтерсе тăкнă: самолетсем — 195, танксем — 650, орудисем — 320, автомашинăсем — 1.500 ытла.

Çав вăхăт хушшинче тăшманăн 20.000 салтакĕпе офицерĕ ытла вилнĕ.

* * *

Пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче полевой тата зенитнăй артиллерин 15 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă тата пĕр поезда çĕмĕрнĕ.

* * *

Гжатскран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă, халăх пуранакан вуншар пункта тытса илнĕ. Вязьмăран хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем нимĕçсем вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, чугунçул станцине тата Темкино ятлă район центрне йышăнса илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ. Темиçе участокра гитлеровецсен пехотипе танкĕсем пирĕн войскăсене малалла кайма чарас тесе темиçе хут та контратака тунă. Çав контратакăсене сирсе янă чухне пирĕннисем нимĕçсен 15 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Царево-Займище ятлă халăх пуранакан пунктра пирĕн боецсем 1.500 совет гражданне ирĕке кăларнă, çав çынсене гитлеровецсем Германие каторгăлла ĕçе хăваласа каясшăн пулнă.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăшманăн танкĕсемпе пехоти пирĕн позицисене атакăланă. Гварди лейтенанчĕ Тарасенко командир пулса тăракан батарейăн артиллерисчĕсем тăшмана вăйлăн персе кĕтсе илнĕ, нимĕçсен 5 танкне пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн пехоти те пысăк çухатусем тӳснĕ. Тепĕр участокра Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕç пехотине пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă, 3 танк персе çĕмĕрнĕ тата боеприпассем тиенĕ 2 автомашинăна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Суджа хулинчен хĕвеланăçнерехре халăх пуранакан пĕр пунктра Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ. Тăшманран 6 оруди, 11 пулемет, 5 миномет, тĕрлĕ грузсем тиенĕ 8 автомашина тата пĕр радиостанци тытса илнĕ. Тепĕр участокра тăшманăн роти контратака тунă, анчах çав ротăна пирĕн пулеметчиксем пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă.

* * *

Льговран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем тăшманпа çапăçса 600 гитлеровеца çити вĕлернĕ, 13 оруди, 28 пулемет, 4 радиостанци тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Ильмень кӳллинчен кăнтăралларахра пирĕн чаçсем нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтерсе халăх пуранакан темиçе пункта, çав шутра Старо-Рамушево тата Ново-Рамушево ятлă пунктсене тытса илнĕ. Тăшманăн пĕр батальон ытла салтакĕсене вĕлерсе пĕтернĕ, 4 оруди тата пулеметсем, винтовкăсем, боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Орел облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ февраль уйăхĕн вĕçĕнче нимĕçсен карательнăй экспедицийĕпе çапăçса 42 гитлеровеца вĕлернĕ. 3 пулемет, 6 автомашина тата 21 винтовка тытса илнĕ. Хăйсен базине таврăннă чухне партизансем чугунçулăн 5 километр тăршшĕ участокне сирпĕнтерсе янă. Тепĕр отрядри партизансем нимĕçсен фронт патнелле пыракан çар эшелонне сирпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз тата 6 вагон çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Курск облаçĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ» ятлă поселокран тухса кайнă чухне нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем пур пуранакан çуртсене те çунтарса янă. Хăшпĕр çуртсемпе подвалсенче çынсем те çунса кайнă е тĕтĕмпе антăхса вилнĕ. Çапла Павел Манеев, унăн арăмĕ тата виçĕ ачи вилнĕ, вĕсене нимĕçсем нӳхрепрен тухма паман. Хăйсен çуртĕсенче Андрей Токарев, Лепина колхозница, унăн икĕ ывăлĕ тата арăмĕ çунса кайнă. Колхозниксен мĕнпур пурлăхне нимĕçсем çаратса пĕтернĕ е çунтарса янă.

Мартăн 10-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 10-мĕшĕнче пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса Белый хулине йышăнса илнĕ. (Смоленск облаçĕ).

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Мартăн 9-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 20 танкне çити тата войскăсемпе грузсем тиенĕ 100 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Полевой тата зенитнăй артиллерин 3 батарейине пусарнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Сычевкăран кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса халăх пуранакан 20 пункта ытла йышăннă. Пирĕн чаçсем Новодугино ятлă район центрĕпе чугунçул станцине йышăнса илнĕ. Тытса илнĕ трофейăсем хушшинче 10 танк, 4 оруди тата боеприпассен склачĕ пур. Гжатскран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре оборонăн пĕр рубежĕнчи тăшман совет войскисен наступленине чарасшăн пулнă. Хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн чаçсем тăшманăн оборонине татса кĕнĕ те малалла куçса пырса халăх пуранакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

* * *

Оленинăран кăнтăртарахра пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă, халăх пуранакан темиçе пункта нимĕçсенчен хăтарнă. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнисем пур. Халăх пуранакан пĕр пункта йышăннă чухне пирĕн боецсем нимĕçсен пĕр батальонне аркатса тăкнă, 6 танк, 8 оруди, боеприпассен складне тытса илнĕ.

* * *

Харьковран кăнтăртарахра тата хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем тăшманăн йышлă пехотипе танкĕсен хаяр атакисене сирсе тăнă. Пĕр участокра пирĕн оборонăн малти хĕрри патне пынă танксене засадăра ларакан орудисенчен пенĕ. Нимĕçсен 9 танкне пĕтернĕ, ыттисем часах тарнă. Н-ски соединенин чаçĕсем тепĕр участокра гитлеровецсен атакине сирсе пăрахса, нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 26 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Ильмень хулинчен кăнтăртарахра пирĕн войскăсем наступленилле çапăçусем туса пынă, халăх пуранакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски соединенин чаçĕсем икĕ кун хушши çапăçса тăшманран 15 оруди, 12 миномет, 56 пулемет, 1.000 ытла винтовка, 12.000 снарядпа мина, 11.000 ытла граната, 210.000 патрон, 160 ещĕк тар, 50 километр тăршшĕ ытла телефон кабелĕ, 3 радиостанци тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тăшманăн чĕрĕ вăйĕ нумай пĕтнĕ.

* * *

Кубань çинче пирĕн чаçсем, гитлеровецсем хаярран хирĕç тăнине сирсе, Красноармейское ятлă район центрне тата халăх пуранакан ытти пунктсене йышăнса илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Украина районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ пысăк чугунçул станцинче вырнаçнă нимĕç гарнизонне сасартăк пырса тапăннă. Хурала вĕлерсе пĕтернĕ хыççăн совет патриочĕсем станцири 12 вагонтан тăракан нимĕç эшелонне сирпĕнтерсе янă тата горючи складне çунтарса янă. 5 километр хушши чугунçул аркатнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 119 винтовка, 2 станковăй пулемет тата патронсем нумай. Германи влаçĕсен распоряженийĕсене пурнăçламаншăн гитлеровецсем персе вĕлерме йышăннă 97 совет гражданне партизансем тĕрмерен хăтарнă. Украина партизанĕсен тепĕр отрячĕ нимĕçсен жандарма управленине аркатса тăкнă. Германие ăсатма хатĕрленĕ 220 тонна тырра халăха валеçсе панă.

* * *

Нимĕçсен 337-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 668-мĕш полкăн 8-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Ян Данилевский çапла каласа панă: «Офицерсем пире çапла калатчĕç: Гжатск — Ржев — Вязьма районĕ стратегиллĕ питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа та халăх пуранакан кашни пунктах тепле пулсан та хӳтĕлемеллех, тетчĕç. Халĕ ĕнтĕ вырăссем хĕссе пынине пула эпир чакнă чух командовани сводкисенче планпа пăхнă тăрăх куçса пыни çинчен тата фронт линине тӳрлетни çинчен калаçаççĕ. Пуçсене уснă салтаксене йăпатас шутпа пĕр унтер-офицер çапла каларĕ: «Каялла чакни, йĕркесĕр чакни те, хупăрласа илнинчен лайăхрах», терĕ».

СТАЛИН юлташа Маршал званине пани çинчен пĕлнĕ хыççăн

ÇĔМĔРЛЕ, мартăн 11-мĕшĕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Темиçе кун каярах пĕтĕм совет халăхĕ хăйĕн аслă полководецне — юратнă Сталина Совет Союз Маршалĕн званине пани çинчен пĕлчĕ. Ку хыпар Тăван çĕршывăн мĕнпур хулисемпе ялĕсене хăвăрттăн саралчĕ.

Çĕмĕрлери ĕççыннисем Сталин юлташа çар званийĕ — Совет Союзĕн Маршалĕн званине панă хыпара тулли кăмăлпа тата пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Сталин юлташ ертсе пынипе Хĕрлĕ Çар нимĕç оккупанчĕсене Совет çĕрĕ çинчен тĕпĕ-йĕрĕпех хăваласа кăларĕ. Аçта Сталин — унта çĕнтерӳ! — Çакăн пек кашни ĕççыннийĕн шухăш-кăмăлĕ.

— Сталин юлташа Совет Союзĕн Маршалĕн званине панишĕн савăнса, эпĕ малашне татах та тухăçларах ĕçлеме сăмах паратăп, — терĕ комбинатри митингра çамрăк стахановец-комсомолец Анисимов. Ĕнер вăл нормăна 210 процент тултарчĕ. Назаров юлташ цехĕнчи стахановецсем А. Волков, В. Мидушкин юлташсем Май уявĕ умĕнхи ăмăртура лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем кулленех нормăна 310 процент е ытларах та пурнăçласа пыраççĕ.

Мартăн 1-мĕшпе 10-мĕшĕ хушшинче комбинатра стахановла ĕçлемелли вунăкунлăх иртрĕ. Çак вунăкунлăхра кашни цех, кашни рабочи ĕç тухăçлăхне чылай ӳстерчĕ. Абушахмин юлташ ертсе пыракан цехра ĕçлекенсем чылайĕшĕ кулленех икшер норма туса ĕçлеççĕ. Мартăн малтанхи вунăкунлăхĕнче Емельянов, Коротков, Ядров юлташсем виçшер норма тултарса ĕçлерĕç, стахановец Артемьев юлташ уйрăм кунсенче нормăна 450 процент таран тултарать.

Никитенко юлташăн цехĕнчи Гудник юлташ ертсе пыракан бригада, стахановла вахтăна тăрса, сменăри задание 540 процент тултарчĕ. Вăл бригада халĕ те çавăн пекех ĕçлесе пырать.

Вунăкунлăхра çамрăк рабочисем, тин çеç ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухнăскерсем, тухăçлăн ĕçлерĕç. Раков юлташ пĕр заказа пурнăçланă çĕрте нормăна 605 процент, Тимохин юлташ — 420 процент, Войков юлташ — 310 процент тултарчĕç.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем районри ĕççыннисене тухăçлăн ĕçлеме, фронта вăйлăн пулăшса тăма чĕнеççĕ.

Патриотка çырăвĕ

Совет халăхĕ фронтовиксен çемьисемшĕн тăванла тăрăшать. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç, Тăван çĕршывăн телейĕпе ирĕклĕхĕшĕн паттăррăн кĕрешсе вилнĕ пирĕн мухтавлă землякăн бригаднăй комиссарăн Мистрюков юлташăн çемьине 2.000 тенкĕ укçа парса пулăшнă. Çак пулăшу фронтра геройла вилĕмпе вилнĕ Мистрюков юлташăн çемьине хумхантарнă. О. Мистрюкова юлташ Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ З. А. Андреева юлташ патне тав туса çыру янă. Патриотка хăйĕн çырăвĕнче çапла çырать:

«Пирĕн çемьешĕн тăрăшнăшăн тата укçа парса пулăшнăшăн Чăваш республикин правительствине тав тăватăп.

Тăван упăшкама çухатнă пирки килсе тухнă хуйхă çинчен пĕлтерме сăмахсем те тупаймастăп. Вăл çемьере те, çавăн пекех коллективра та чи лайăх юлташ тата тус пулнă. Хуть мĕнле ĕçе тытăнас умĕн те иккĕленсе тăман, нихăçан та хăравçă тата кахал пулман. Вăл партипе правительствăна пĕр вĕçĕмсĕр парăнса тăракан çын пулнă. Тăван çĕршыва нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларас ĕçе вăл нимрен те мала хунă. Вăрçăра, пĕрлехи чыслă ĕçшĕн хĕрӳллĕн çапăçнă вăхăтра, вăл хăйĕн пурнăçне шеллемен, çемье çинчен те шутласа тăман, — çакăн пирки вăл фронтран çырса пĕлтернĕччĕ.

Анчах темĕн пек йывăр пулсан та, эпир, унăн арăмĕпе хĕрĕсем, çак хуйха тӳссе ирттерме çирĕплĕх, вăй-хал çитеретпĕр, пуçа усса тăмастпăр. Урăхла пулма та пултараймасть, эпир çавăн пек вĕренсе çитĕннĕ. Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçлĕхе туйса тăрасси — совет çыннисемшĕн нимрен те паха.

Манăн упăшкам çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçлĕхне тӳррĕн пурнăçларĕ. Пирĕн те ĕçре, вĕренӳре унăн примерне йышăнса илмелле. Манăн хамăн хĕрсене тĕрĕс воспитани парса, вĕсене ашшĕн пархатарлă ĕçĕсене тивĕçлĕ пулмашкăн пăхса çитĕнтермелле.

Пирĕншĕн партипе правительство, вырăнти влаçсем тăванла тăрăшаççĕ. Çав пулăшу пире çак йывăр хуйăха тӳссе ирттернĕ çĕрте вăй парать.

Пире пулăшнăшăн питех те пысăк тав партипе правительствăна, пысăк тав аслă Сталина!

Салампа О. Мистрюкова.»

Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орлов Шупашкарта

Мартăн 10-мĕшĕнче Совет Союзĕн Геройĕ капитан Ф. Н. Орлов юлташ Н-ски заводра пулчĕ. Кунта вăл цехсенче пулса, рабочисем фронт заказĕсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынипе паллашрĕ. Рабочисен коллективĕ пĕр çĕре пухăнсан, Ф. Н. Орлов юлташ Хĕрлĕ Çарăн фронтри геройла ĕçĕсем çинчен, тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçлĕхне мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен каласа пачĕ.

Рабочисем хăйсем енчен фронт ыйтнисене вăхăтра тивĕçтерсе пыма героя сăмах пачĕç.

Унтан Орлов юлташ Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Радиокомитетра пулчĕ. Кунта Совет Союз Геройĕн Ф. Н. Орлов юлташăн Чăваш республикинчи ĕççыннисене саламласа, вĕсен умĕнче тупа туса каланă сăмахне пленка çине çырса илчĕç.

Çулталăкри плана Май уявĕ тĕлне 70 процент тултарассишĕн

ШАХАСАН. Ямаш сельповĕн коллективĕ 1943 çулти 1-мĕш кварталти тавар çаврăнăш планне паянхи кун тĕлне 155 процент тултарчĕ. Хăшпĕр лавкасем плана 200 процента яхăн тултарчĕç. Сельпон Вăрман Ямашри уйрăмĕ (продавец К. Шевелева юлташ) — плана 207 процент тултарнă. Вăл Тугайри лавкапа ăмăртать.

Пирĕн сельпо коллективĕ халĕ Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ, Эпир Май уявĕ тĕлне çулталăкри плана 70 процент тултарассишĕн кĕрешетпĕр. Пиренпе ăмăртма Уйкас-Кипек сельповĕн коллективне чĕнетпĕр.

А. Кириллов.
Сельпо председателĕ.

Машинăсене сыхласа усрас ĕçри хуçасăрлăха халех пĕтермелле

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ 1942 çулхи декабрĕн 10-мĕшĕнче «МТС-сем хĕллехи вăхăтра тракторсене тата ялхуçалăхĕнчи ытти машинăсене сыхласа усрасси çинчен» постановлени йышăннă. Çак постановление пурнăçа кĕртсе пырса, МТС-сен директорĕсемпе политотделсем тракторсемпе комбайнсене тата ытти машинăсене уйхирти тата итемсем çинчи ĕçсем вĕçленнĕ хыççăн бригадăсенчен актсемпе çирĕплетсе илмелле тата машинăсене сыхласа усрамалли мерăсене йышăнмалла пулнă.

Анчах та республикăри хăшпĕр МТС-сенче ку тĕлĕшпе халĕ те кирлĕ ĕçсем туса ирттермен-ха. Тракторсемпе комбайнсене сыхласа усрас ĕçри хуçасăрлăха, юхăнчăка пĕтермен.

Сĕнтĕр МТС-ĕ хăйĕн тракторĕсемпе комбайнĕсене тата ытти машинисене хĕллехи вăхăтра сыхласа усрамалли вырăнсем туман. Чăваш АССР Совнаркомĕн решенийĕ тăрăх кунта машинăсене лартма сарай тумалла пулнă. Укçа-тенкĕ уйăрса панă пулсан та, Сĕнтĕр МТС-ĕпе ВКП(б) Сĕнтĕр райкомĕ ку тĕлĕшпе нимĕн те туман. Çавна пула Сĕнтĕр МТС-ĕн тракторĕсемпе комбайнĕсем нумайĕшĕ халь юр айне пулнă.

Ку çеç те мар, Сĕнтĕр МТС-ĕн дирекцийĕ машинăсене сыхласа усрас тĕлĕшпе тума пултарнă кирлĕ ĕçсене те вĕçне çити туса пымасть. МТС хуçалăхĕнче юхăнчăка пĕтерме тăрăшмасть.

МТС килкартишне молотилкăсенчен пĕрине çеç илсе пынă: 6 трактор, вĕсен плугĕсем, 2 комбайн, 22 молотилка, 9 сеялка, 11 культиватор, 14 жнейка, 29 плуг, 7 лущильник тата 1 сÿре Сĕнтĕр тата Советски районсенчи колхозсенчех лараççĕ. Вĕсене ăçта ĕçленĕ çавăнтах тата çаплипех пăрахса хăварнă.

ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн постановленийĕ тăрăх тракторсене, комбайнсене тата ытти машинăсене те вĕсемпе ĕçлекен трактористсем çумне çирĕплетмелле, ĕç пĕтнĕ хыççăн трактористсем хăйсем ĕçленĕ машинăсене хĕллехи вăхăтра усрама МТС-ăн старши механикне актсемпе çирĕплетсе памалла. Сĕнтĕр политотделĕ (начальникĕ Константинов) тата партин МТС-ри пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Дорофеева) çак ĕçе кирлĕ пек хакламан. Тракторсенчен магнетосене, динамăсене, карбюраторсене, электропроводсене, насоссене илсе хуман, комбайнсен моторĕсене вĕсен пĕтĕм арматурисемпе пĕрле, транспортсемпе сăнчăрĕсене пуçтарса илмен, сеялкăсен тырă трубисене уйăрса хуман, вĕсем мĕнле пылчăклă пулнă çаплипех лараççĕ. Тракторсен плугĕсем МТС-а илсе пыни те, колхозсенче пăрахса хăварнисем те — пурте юр айĕнче лараççĕ. Вĕсене юсама пачах тытăнман.

«МК—110» маркăллă сложнăй молотилкăсене сыхласа усрас енĕпе Сĕнтĕр МТС-ĕнче ответлăх пачах çук. Авăн çапса пĕтернĕ хыççăн районри 22 колхозра сложнăй молотилкăсене уйрах хăварнă. Нумайĕшне вĕсене нимĕнпе те витмен, алисене, чĕнĕсене пуçтарса илмен, вĕсем юр айне пулса ларнă тата ку молотилкăсене никам та сыхламасть те. Тĕслĕхрен: Коминтерн ячĕпе тăракан тата «Красное Знамя» колхозсенче сложнăй молотилкăсем уйăра лараççĕ, вĕсене хуралакансем çук.

МТС руководителĕсем машинăсене упрас ĕçе пĕтĕмĕшпех машиноведсем çине хунă. Колхозсенче машинăсем епле упранса тăнипе вĕсем пачах интересленмен. Директор, МТС политотделĕн начальникĕ Константинов, ВКП(б) райкомĕ те МТС-ăн ялхуçалăх машинисем епле упранса тăнине тĕрĕслемен, вĕсене сыхлас енĕпе нимĕн те туман. Сĕнтĕр районĕнчи руководительсем Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕн решенийĕнче МТС-сене машинăсем лартмалли сарайсем тума колхозсем енчен ĕç вăйĕпе, туртăм вăйĕпе тата выранти материалсемпе пулăшу парасси çинчен палăртнă пункта пурнăçа кĕртес енĕпе нимĕн те туман.

Район совечĕн исполкомĕ ку решение хăйĕн ларăвĕнче сÿтсе явман. МТС машинисем валли çĕнĕ сарайсем тăвас, пуррисене юсас енĕпе нимĕн те туман. ВКП(б) Сĕнтĕр райкомĕн секретарĕ Гусев юлташ та асăннă постановление епле пурнăçласа пынине тĕрĕслемен. Партин МТС-ри пуçламĕш организацийĕ ялхуçалăх машинисене пăхса усрас ыйтупа пачах интересленмен, унăн секретарĕ Дорофеева МТС-ра миçе трактор, комбайн, молотилка, жнейка пуррине тата вĕсем мĕнле упранса тăнине те пĕлмест.

Сĕнтĕр МТС-ĕ, ВКП(б) Сĕнтĕр райкомĕ тракторсене, комбайнсене тата ялхуçалăх машинисене кăçал ĕçе вăхăтра кăларассишĕн ответлă пулса тăраççĕ. Ку тĕлĕшпе кирлĕ мерăсене вĕсен халех йышăнмалла.

П. Козлов.

Васкаман çĕрте

ШАХАСАН. (**Хамăр корр.**). Энтриялĕнчи «Герой» колхоз (председателĕ Рыжков) паянхи куна çитсе те иртнĕ çулхи тырпула çапса пĕтермен. 3 гектар çинчи тырă çеç юлнă пулсан та, кунта çак ĕçе хăвăртрах вĕçлессишĕн тăрăшмаççĕ. Çавăн пекех, çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе те тивĕçлипе ĕçлемеççĕ. Вăрлăхсене уйăрса хунă та лăпланнă. Вĕсене сортласси вăраха юлса пырать. Сĕлĕ вăрлăхне сортлама пачах тытăнман. Ялхуçалăх машинисене юсас ĕç те сÿрĕккĕн пулса пырать. Пысăк колхоз пулин те, кăçал уя тислĕк мĕнпурĕ те 800 лав кăна кăларнă, уйра юр тытса хăварас ĕçе пачах хакламаççĕ.

Колхозниксем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне начар организациленĕ. Вĕсене кĕл вăйлă тырпул туса илес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен каласа ăнлантарман. Çавна пула колхозниксем кĕле урама, çырмасене тăкса сая яраççĕ. Тырпулсене уйран пуçтарса кĕртнĕренпе колхозра стена хаçачĕ пĕр номер те тухман.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе васкани кирлĕ.

В. Веселов.

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

КОМСОМОЛ ОРГАНИЗАЦИЙĔН ĔÇĔ ЛАЙĂХЛАНЧĔ

ШАХАСАН. Комсомолăн Вăтакас Кипечри «Память Ильича» колхозри пуçламĕш организацийĕ нумай вăхăт хушши начар ĕçлесе пынă. Комсомолецсем виç-тăватшар уйăх хушши член укçи тÿлемен. Пуçламĕш организаци секретарĕ пулнă С. Петров комсомолецсен пĕр пухăвне те ирттермен. Ял çамрăкĕсем культурăллă-массăллă ĕçе пачах хутшăнман. Çавна пула ĕнтĕ вулав çурчĕ те хупăнса ларнă.

ВЛКСМ Шăхасан райкомĕ нумай пулмасть çак организацинчи çитменлĕхсене пĕтересси çинчен бюрора сÿтсе яврĕ. Комсомолецсем комсомол организацине ертсе пыма пултаракан çамрăка — М. Леонтьев юлташа суйларĕç. Кун хыççăн комсомол организацин ĕçĕ лайăхланчĕ. Кăçал икĕ уйăх хушшинче комсомол ретне 11 çамрăка илнĕ. Халĕ комсомолецсем хушшинчи дисциплинăна çирĕплетнĕ. Кашни уйăхрах виçĕ хутран кая мар пухусем иртеççĕ. Вулав çуртĕн ĕçне йĕркелесе янă. Комсомолецсем агитациллĕ-массăллă ĕçе вăйлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем колхозниксене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенчи çапăçу эпизочĕсем çинчен вуласа параççĕ. Комсомол организацийĕ çумĕнче терлĕ кружоксем ĕçлеме пуçларĕç. Комсомолецсем кĕске вăхăт хушшинче 4 спектакль лартрĕç.

Организаци кашни комсомолеца уйрăм ĕçсем хушнă. Комсомолецсем фермăри çамрăк выльăхсене шефа илчĕç. Вĕсем хăйсене уйăрса панă çамрăк выльăхсене юратса пăхаççĕ. Кунсăр пуçне вĕсем вырăнти удобренисене хатĕрлес тата фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлеççĕ. Çакă ялти çамрăксен умĕнче комсомолăн влиянине татах ÿстерчĕ. Малта пыракан çамрăксем чылайĕшĕ комсомол ретне кĕме хатĕрленеççĕ.

А. Федоров.

Вăрман хатĕрлевĕнче фронтри пек ĕçлемелли икэрнелĕх

Вăрманта ĕçлекенсемшĕн тăрăшмалла

КАНАШ, мартăн 9-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Леспромхоз чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли сезонри плана мартăн 7-мĕшĕ тĕлне хатĕрлес енĕпе 77,4 процент, турттарас енĕпе 75,5 процент тултарнă.

Икэрнелĕх пуçланнăранпа чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесе турттарас ĕçе Вăрмар районĕ лайăхрах туса пыма тытăнчĕ. ВКП(б) райкомĕ ку ĕçе ертсе пыма райкомăн иккĕмĕш секретарьне И. Романов юлташа çирĕплетрĕ. Вăрман касакансем хушшинче ĕçлеме вăрмана партипе совет активне ячĕ. Сăмахран, пропагандист Яковлев тата техниксем Якимовпа Ефимов юлташсем вăрман касакансем хушшинче массăллă-ăнлантару ĕçне туса пыраççĕ. Район чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли плана мартăн 15-мĕшĕ тĕлне пурнăçлассишĕн кĕрешет.

Анчах Сĕнтĕрвăрри районĕ икэрнелĕхе начар хутшăннă. Вăл вăрмана янă çынсемпе лашасене ялан ĕçлеттерессишĕн тивĕçлипе тăрăшмасть. Фураж тата вăрман касакансем валли апат-çимĕç йĕркеллĕ парса тăман пирки, мартăн 7-мĕш ыран тенĕ чухне Сĕнтĕрвăрри районĕнчен вутă хатĕрлекенсем 40 çын, 10 лав вăрмантан пăрахса кайнă. Çапла вара мартăн 7-мĕшĕнче леспромхозра, мартăн 6-мĕшĕнчипе танлаштарсан, хатĕрлекенсем 104 çын, турттаракансем 74 çын сахал тарах ĕçленĕ.

Леспродторг (директорĕ Половиков) вăрман касакансене ĕçлеме кирлĕ условисене тусма парассишĕн тăрăшмасть. Столовăй начар ĕçленĕ пирки мартăн 6-мĕшĕнче 80 çын ирхи апат тумасăрах ĕçлеме кайнă.

Çак çитменлĕхсене пĕтерсен, леспромхоз çумне çирĕплетнĕ районсем ĕç тата туртăм вăйĕ çителĕклĕ парса тăрсан, Канаш леспромхозĕ чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес ĕçе чылай хăвăртлатма пултарать.

С. Егоров.

Чăваш республикинчи искусство работникĕсене—фронтовиксенчен салам

Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ фронтра концертсем парать. Çав концертсем командирсемпе боецсене питех те кăмăла каяççĕ. Артистсен ушкăнне çамрăк дирижер В. Лебедев юлташ ертсе пырать. Чăваш артисчĕсен фронтри концерчĕсем çинчен Действующи Çартан капитан Елисеев, кĕçĕн лейтенантсем Ширкулов тата Хасаев юлташсем çыру янă. Вĕсем унта çапла çыраççĕ:

«Февралĕн 19-мĕшĕнче эпир, Н-ски чаçри командирсемпе боецсем, чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕн артисчĕсем лартнă концерта итлерĕмĕр. Концерт содержанийĕ енчен те, артистсен вăййи енчен те питех те килĕшрĕ. Чăваш артисчĕсен концерчĕ Тăван çĕршыври халăхсен туслăхне çирĕплетес тĕлĕшпе пысăк ĕç пулчĕ, боецсен çапăçури кăмăлне çĕклерĕ, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çĕнтерессишĕн паттăррăн çапăçма боецсене, командирсене тата политработниксене вăй-хал хушса пачĕ.

Эпир чăваш халăхĕн музыка творчествине, нациллĕ искусствине пысăка хурса хаклатпăр, чăвашсен нациллĕ культурине, музыка искусствине малашне татах вăйлăн чечеклентерсе пыма ăнăçу сунатпăр, сирĕн талантлă артистсем йышлăн ÿссе çитĕнессе шанатпăр. Чăваш республикинчи искусство работникĕсене тав тăватпăр тата боевой салам яратпăр.

Капитан **Елисеев**, кĕçĕн лейтенантсем: **Ширкулов, Хасаев**».

Китай послĕ Фу Бин-чан господин верительнăй грамотăсене пани

1943 çулхи мартăн 9-мĕшĕнче, кăнтăрла 12 сехетре Кремльре СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ Китай республикин СССР-ти чрезвычайнăй тата полномочнăй послне — Фу Бин-чан господина йышăннă. Фу Бин-чан хăйĕн верительнăй грамотисене панă.

Фу Бин-чан господинпа пĕрле посольство советникĕ Чан-Дин господин, çар аташши — генерал-майор Го-Де-Чуань господин, посольствăн 1-мĕш секретарĕ Чен Дай-чу господин тата СССР-ти Китай посольствин ытти членĕсем те пулнă. Посол вĕсене М. И. Калинин юлташпа паллаштарнă.

Верительнăй грамотăсене илнĕ чухне Ютçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ В. Г. Деканозов юлташ, СССР Верховный Совет Президиумĕн секретарĕ А. Ф. Горкин юлташ, Ютçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн протоколсен отделĕн заведующийĕ Ф. Ф. Молочков юлташ пулнă.

Верительнăй грамотăсем панă хыççăн Фу Бин-чан господин М. И. Калинин юлташпа калаçнă.

Ют çĕршывсенче

ЛОРДСЕН ПАЛАТИНЧЕ КРЭНБОРН ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, лордсен палатин лидерĕ Крэнборн палатăра панă ыйту çине ответлесе çапла каланă: нумаях пулмасть США правительстви çывăхри вăхăтрах пĕрлешÿллĕ нацисен канашлăвне туса ирттерсен лайăх пулĕччĕ, тесе пĕлтерчĕ. Вăл канашлу Уйллес февралĕн 28-мĕшĕнче каланă ыйтусем тăрăх пулмалла. «Кун йĕркине халĕ паллă туман та-ха,— тенĕ Крэнборн,—анчах калаçусем экономика ыйтăвĕсем тăрăх анчах пулмалли паллă. Англи правительстви Америка правительствин çав пуçарăвне саламлать. Англи правительстви вăрçă хыççăнхи финанс ыйтăвĕсем тăрăх доминионсемпе калаçса ирттернĕ те ĕнтĕ. Çавăн пекех тата Англире пурăнакан союзниксен правительствисемпе те информациллĕ канашлусем туса ирттернĕ».

ФРАНЦИРЕ ГИТЛЕРЛА ОККУПАНТСЕМПЕ КĔРЕШНИ

ЛОНДОН, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Францире ĕç повинноçĕ йĕркипе Германи предприятийĕсенче ĕçлеме çамрăксене мобилизацилесси çинчен пĕлтернĕ хыççăн çĕршывра нимĕçсене хирĕç партизанла кĕрешÿ вăйланса кайнă. Брестра Франци патриочĕсен ушкăнĕ Германи салтакĕсемпе офицерĕсен кинематографне тапăннă. Залра ларакан нимĕçсем çине темиçе граната пăрахнă. Вилнисем тата аманнисем пур. Çав кунах француз патриочĕсен тепĕр ушкăнĕ хулари главнăй почтамтăн нимĕç охранине тапăннă, икĕ нимĕç салтакне вĕлернĕ. Брестра нимĕçсене тапăнасси урамсенче уççăнах çапăçни пек пулса пырать.

«Марсельез» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Нанси çывăхĕнчи Туль хулинче нимĕç салтакĕсен отрячĕ çине граната пăрахнă. Нумай салтака вĕлернĕ е амантнă.

Кĕрешекен Францин штабĕ çапла пĕлтерет: çак кунсенче Франци патриочĕсем Лилль хулинчи нимĕç офицерĕсем яланах çÿрекен казино çуртне гранатăсем пăрахнă. 23 нимĕç офицерне вĕлернĕ.

ГЕРМАНИ САМОЛЕЧĔСЕМ ШВЕЦИ ЧИККИНЕ ПĂСНИНЕ ХИРĔÇ ШВЕЦИЯ ПРОТЕСТЛЕНИ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Стокгольмс тиднинген» хаçат çапла пĕлтерет: Германи самолечĕсем мартăн 6-мĕшĕнче Швеци чиккине пăснине хирĕç Швецин Берлинри посольстви ютçĕршыв ĕçĕсен министерстви хушнипе протест панă.

Швецин оборона штабĕн ПВО отделĕ пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 8-мĕшĕнче нимĕç самолечĕсем çĕнĕрен Скона районĕнче тата Сирисхамнпа Карлисхамн хушшинче Швеци территорийĕ урлă темиçе хут та вĕçсе каçнă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 9-мĕшĕнче, кăнтăрла, англичансен «Спитфайр» йышши истребителĕсем Çурçĕр Франци çине темиçе хутчен вĕçсе пырса тапăннă. Мартăн 9-мĕшĕнче каçхине англичансен «Москито» бомбардировщикĕсем Ла-Манш çывăхĕнчи чугунçул центрне атакăланă. Бомбăсем пăрахнипе взрывсем пулнине палăртнă.

АНГЛИ САМОЛЕЧĔСЕМ МЮНХЕН ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНĂ

ЛОНДОН, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Мюнхенри промышленность объекчĕсем çине питĕ нумай бомба пăрахнă. Англи самолечĕсен ытти соединенийĕсем хĕвеланăç Германин тĕрлĕ объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă, тăшманăн шывĕсене минăсем лартса тухнă. 11 самолет хăйсен базисене таврăнман.

Мюнхен Германин индустрипе чугунçулăн паллă центрĕ шутланать. Мюнхенра паровозсемпе вагонсем юсакан мастерскойсем, машинăсемпе моторсем тăвакан заводсем, çавăн пекех тата подводнăй лодкăсем валли двигательсем, авиаци моторĕсем, броне-автомобильсем, танксем тата гранатăсем тăвакан предприятисем пур.

ЛОНДОН, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Мюнхен çине вут хыптаракан тата фугаслă бомбăсем 500 тоннăран нумай ытла пăрахнă. Çак ĕçе 4 моторлă бомбардировщиксем тунă. Вĕсенчен нумайĕшĕн хăйсен базисенчен Мюнхена çитме 1.100 километр ытла вĕçмелле пулнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ПАЛЕРМОНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш-çар вăйĕсен командованийĕн пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, мартăн 9-мĕшĕнче çĕрле союзниксен вăтам бомбардировщикĕсем Палермо çине вĕçсе пырса тапăннă. Пристань районне бомбăсем ÿкнине паллă тунă. Бомбардировщиксем çавăн пекех тата Ликату çине (Сицили утравĕ) вĕçсе пырса тапăннă. Самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Заем ĕçĕн хăшпĕр итогĕсем

Фронт нушисене тивĕçтерме укçа-тенкĕ пĕр вĕçĕмсĕр парса тăнă çĕрте государство дохочĕсене пур майпа та ÿстерни, государство укçине перекетлĕн расходлани кирлĕ. Вăрçă вăхăтĕнче государство расхочĕсене витсе пырас тĕлĕшпе халăхăн укçи-тенкине мобилизацилесси (тĕрлĕ налогсемпе сборсем, ĕççыннисем хăйсен ирĕкĕпе оборона фондне укçа хывни, заемсем тата перекет кассисене укçа хывни) паллă вырăн йышăнса тăрать.

Совет халăхĕн вăйлă патриотизмĕ, вăл нимĕç захватчикĕсене тĕппипе аркатса тăкичченех кĕрешме хатĕр тăни пирĕн халăх хăйĕн укçи-тенкине вăрçăпа çыхăнса тăракан мероприятисене пурнăçланă çĕре панинче палăрса тăрать.

1942 çулхи апрельте кăларнă Военнăй заема вырнаçтарас тĕлĕшпе подписка ирттерни — совет халăхĕ хăйĕн пĕтĕм вăйне Хĕрлĕ Çара пулăшнă çĕре пама хатĕр тăнине кăтартса пачĕ. 1942 çулхи апрелĕн 14-мĕшĕнче 10 миллиард тенкĕлĕх кăларнă Военнăй заема вунă кун хушшинче 12 миллиард та 360 миллион та 831 пин тенкĕлĕх вырнаçтарнă.

Чăваш республикин пур хулисемпе районĕсенче те заема çырăнса илесси питĕ ăнăçлăн пулса иртрĕ. Апрелĕн 26-мĕшĕ тĕлне республика заема 64.010 пин тенкĕлĕх вырнаçтарчĕ, иртнĕ çултипе танлаштарсан, çакă вăл 39.212 пин тенкĕ ытларах вырнаçтарни пулать. Подписка пуринчен ытла ялсенче ăнăçлăн иртрĕ. Колхозниксемпе единоличниксем заема 29.007 пин тенкĕлĕх çырăннă, вăл ĕнтĕ виççĕмĕш пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) заемне вырнаçтарнинчен 4,5 хут ытларах пулнине кăтартать.

Военнăй заема ăнăçлăн вырнаçтарни вăл — государствăпа халăх интересĕсем уйрăлми тачă çыхăнса тăнине, фронтпа тыл пĕрлĕхлĕ пулнине, пирĕн тыл çирĕп пулнине кăтартса тăрать.

Пĕлтĕрхи заем кампанийĕн пахалăхĕ заема ăнăçлăн вырнаçтарнинче кăна мар, подписка укçи ялта пысăк хăвăртлăхсемпе пуханнинче те пулса тăрать. Пур районсенче те тенĕ пекех подписка пухнипе пĕр вăхăтрах заем укçи пухас ĕç те пулса пычĕ.

Вуншар пин рабочисемпе служащисем заема уйăхри ĕçукçинчен ÿстерсе çыранчĕç, çĕршер пин колхозниксем хăйсем перекетленĕ укçан пысăк пайне государствăна кивçен пачĕç. Пăрачкав районĕнчи «Передовик» колхозăн председателĕ Захаров юлташ заема 5 пин тенкĕлĕх çырăнса укçине те çавăнтах тÿленĕ. Чкаловски районри «Маяк» колхозăн председателĕ Минаев юлташ 4 пин тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех тÿленĕ. Комсомольски районри «Двигатель революции» колхоз колхозникĕсем Ярышевпа Калашников юлташсем пиншер тенкĕлĕх, Петухов юлташ — 2.000 тенкĕлĕх çырăннă. «Комбайн» колхоз колхозникĕ, 80 çула çитнĕ Морозов заема 1.500 тенкĕлĕх çырăннă, укçине çавăнтах тÿленĕ. Кун пек тĕслĕхсем питех те нумай пулнă.

Красноармеецсен ашшĕ-амăшĕсем, пиччĕш-шăлнĕсем, арăмĕсемпе йăмăкĕсем заема вырнаçтарас ĕçре пур çĕрте те хăйсем пример кăтартса, ку ĕçĕн организаторĕсем пулса тăчĕç. Ишлей районĕнчи «Çĕнĕ хунав» колхоз членĕ Я. Сергеев колхозниксен пухăвĕнче çапла каланă: «Манăн виçĕ ывăл фронтра нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешеççĕ. Çав кĕрешÿре эпĕ вĕсене тÿрĕ кăмăлпа ĕçлесе перекетленĕ укçа-тенкĕпе пулăшатăп». Çавăнтах вăл заема 4.500 тенкĕлĕх çырăнса укçине тÿлесе татнă. Чкаловски районри «Хĕрлĕ ялав» колхоз колхозницине А. Артамонова—мишингрец «манăн упăшкам фронтра фашистсене аркатать, эпĕ 1.000 тенкĕлĕх çырăнатăп» тесе, заем укçине çавăнтах тÿленĕ. Артамонова хыççăн красноармеецсен арăмĕсем, сăмахран, Ф. Кудряшова пиншер тенкĕлĕх çырăннă. Республикăн ытти хулисемпе ялĕсенче çавăн пек паха тĕслĕхсене çĕршерĕн илсе кăтартма пулать.

Халĕ, 1942 çулти Военнăй заем вĕсен хисепĕ 1.000-рен те иртет, укçине пухса çитернĕ хыççăн, пирĕн республикăра заем облигацийĕсене ĕççыннисене укçалла сутма пуçланă. Пĕтĕмпе 1.631 пин тенкĕлĕх сутса вырнаçтарнă. Пăрачкав районĕнче 229 пин тенкĕлĕх сутнă, Сĕнтĕр районĕнче 327 пин тенкĕлĕх, Елчĕк районĕнче 107 пин тенкĕлĕх, Куславкка районĕнче 129 пин тенкĕлĕх, Чкаловски районра 159 пин тенкĕлĕх тата ытти хăшпĕр районсенче те чылай сутнă.

Пирĕн заемсен авторитечĕ халăх хушшинче ÿснĕ-çемĕн ÿссех пырать, çавăнпа пĕрлех ĕççыннисем заемсенчен илекен тупăш та ÿссех пырать.

1938—1940 çулсенче Чăваш республикинчи ĕçхалăхĕ заемсен вылявĕсемпе купонĕсем тăрăх 4.524 пин тенкĕлĕх тупăш илнĕ пулсан, 1941-мĕшпе 1942-мĕш çулсенче (2 çул хушшинче) ĕççыннисем, заем облигацийĕсен пысăк пайне çĕршыв оборони фондне хывнă пулсан та, 5.792 пин тенкĕ таран тупăш илнĕ. Кăçал Улатăр районĕнче 173 пин тенкĕ, Çĕмĕрле районĕнче 90 пин тенкĕ, Хĕрлĕ Чутай районĕнче 34 пин тенкĕ, Шупашкар хулинче 200 пин тенкĕ вылявсем тăрăх тухнă укçана тÿленĕ.

Заем тытакансене вылявсем тухнине тĕрĕслеме пулăшас шутпа кашни ялсовет исполкомĕнче, вулав çуртĕнче, пысăк предприятисемпе учрежденисенче справочнăй сĕтелсем организациленĕ. Республикăра вĕсенче вылявсене тĕрĕслеме тираж таблицисем çителĕклех пур.

Анчах хăшпĕр справка сĕтелĕсем хăйсен ĕçне çителĕклĕ таран туса пымаççĕ-ха. Сăмахран, Канаш районĕнчи Яманкасси ялсоветĕнче заем облигацийĕсене тавккишĕпех тĕрĕслесе тухнă хыççăн 30 пин тенкĕлĕх выляв тухнине палăртнă.

Справкăсем парас ĕç Елчĕк районĕнче лайăх пырать. Февраль уйăхĕнче кăна унта 150 выляв тухнине палăртса 13 пин тенкĕ ытла тÿленĕ. Лаш-Таябари справка сĕтелĕнче ĕçлекен Емельянов 4 пин тенкĕлĕх вылявсем тухнине тупса палăртнă. Сталин ячĕпе тăракан колхозри справка сĕтелĕнче ĕçлекен М. Чебуков февраль уйăхĕнче 14 выляв — 2 пин тенкĕлĕх тупса палăртнă.

Кун пек лайăх тĕслĕхсем татах та пур. Анчах районсенчи хăшпĕр перекет кассисем (Октябрьски, Кувакино, Вăрмар) ку ĕçе тивĕçлипе хакламаççĕ-ха.

Финанс органĕсемпе перекет кассисен, заем уполномоченнăйĕсен хальхи задачи — подписчиксене заем облигацийĕсене панине, заем укçине тÿлесе татнине тĕрĕслесси пулса тăрать. Справка сĕтелĕсен ĕçне лайăхлатмалла, облигацисем çине вылявсем тухнине тĕрĕслемелле, вылявсене илме пулăшмалла.

А. МИХАЙЛОВ,
Чăваш АССР перекет кассисемпе госкредит Управленин начальникĕн заместителĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи Дорупраленин Дорснабне Шупашкарта ĕçлеме конюх, возчик тата сторож кирлĕ.

Управленин кадрсен отделĕнчен çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар. Комсомол 15 çул тултарни урамĕ, 2.

Чăваш АССР Наркомпросне бухгалтер-ревизор, статистик, управделами тата машинистка кирлĕ.
3—1

Чувашшвейпромсоюза финанс пайĕн пуçлăхĕ, экономист-финансист тата бухгалтер ревизор кирлĕ.
3—2.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

... СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.